Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Пурăнас текен малаллах пăхать

Республика тĕп хулинчен килнĕ иккĕмĕш ушкăн «Чувашсетьгаз» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕнче, Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх муниципаллă предприятийĕнче, «Чувашэнерго» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн Çурçĕрти электричество сечĕсен Мăн Сĕнтĕрти филиалĕнче пулчĕ, кунти ĕç коллективĕсемпе тĕл пулусем ирттерчĕ, специалистсем ĕçлекенсен ыйтăвĕсем çине хуравларĕç. ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Ю.М. Кислов ертсе пыракан ушкăнра ЧР Минпромэнерго министрĕн çумĕ Н.В. Дмитриева, медицина экспертизин федераллă патшалăх учрежденийĕн Чăваш Республикинчи тĕп бюровĕн ертӳçин çумĕ Д.С. Харитонов, ЧР Промышленноç тата энергетика министерствин энергипе тивĕçтерессин тата ТЭК ĕçне координацилессин пайĕн пуçлăхĕ Р.Р. Бухарин, район администрацийĕнчен район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.Г. Никитин пулчĕç.

Çавна палăртмалла. Асăннă предприятисенче паянхи вăхăтшăн лару-тăру япăх темелле мар. Чылай çĕрте экономика кризисĕ çине йăвантарса çынсене ĕçрен кăлара-кăлара янă е административлă отпусксене ăсатнă, ĕç укçи вăхăтра тӳлемен е ăна самай чакарнă тĕслĕхсем тĕл пулаççĕ пулсан, ушкăн пулса курнă предприятисенче кун пекки сисĕнмест. Апла пулин те кризисăн тӳнтерле витĕмне чакарма патшалăх пулăшăвĕпе усă курассинче çитменлĕхсем çук мар.

Калăпăр, çынсене обществăлла ĕçсене явăçтарма патшалăх хальхи вăхăтра ĕçпе тивĕçтерекен центрсем урлă сахал мар укçа-тенкĕ уйăрать. Май килнĕ таран вĕсемпе усă курма тăрăшас пулать. Çапла тăваççĕ те «ăслăраххисем». Акă Муркаш районĕсĕр пуçне Етĕрне тата Хĕрлĕ Чутай районĕсене пăхса тăракан «Моргаушимежрайгаз» филиалĕнче те обществăлла ĕç вырăнĕсем йĕркелеме майсем пур. Ялсенчи газ пăрăхĕсене сăрлассинех илер. Çак ĕçе пурнăçлама пысăк квалификациллĕ специалистсемех кирлĕ мар.

Ĕçпе тивĕçтерекен центр урлах бюджет уйăракан укçа-тенкĕпе усă курса рабочисене ытти профессисене вĕрентессине йĕркелеме те пулать. Ку та палăрăмлă самант.

Район территорийĕнче пушарсем тухнă тĕслĕхсем иртнĕ çулхинчен самай ытларах пулни канăçсăрлантарать. Унччен пулнă ведомствăлла пушар хуралĕн деповĕсем хăш-пĕр пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем арканса кайнă май ĕçлеме пăрахрĕç. Çавна май малашне ял тăрăхĕсем хушшинчи муниципаллă пушар хуралĕн службисене йĕркелеме пăхнă. Малтанах вĕсем Юнкăра, Чемейре, Турайра ĕçлеме тытăнмалла. Черетре – Мăн Сĕнтĕр, Йӳçкасси, Ярапайкасси.

Тасалăх, тирпей-илем пирки те манма кирлĕ мар. Районта йăла каяшĕсене вырнаçтарма ятарлă полигон пулманни паянхи кунхи ыйту мар ĕнтĕ. Çавна май чылайăшне пластмасса, кантăк кĕленчесене пухассине йĕркелесси канăçсăрлантарать. Хальхи вăхăтра вара вĕсем ăçта кăна йăваланса выртмаççĕ пулĕ. Йăлара ытти ăпăр-тапăр та сахал мар пухăнать. Ку тĕлĕшпе тинех лав вырăнтан тапранчĕ темелле. Ятарлă çĕнĕ полигон Ивановка ялĕнчен 1200 метрта пулĕ. Ăна пĕтĕмпех саккуна пăхăнса тăваççĕ. Халĕ экспертиза витĕр тухассипе ĕççем пыраççĕ. Полигон лаптăкĕ 12 тăваткал километр пулмалла. Çĕр айĕнчи шывсене вараласран котлован тĕпне пĕтĕмпех изоляцилеççĕ. Кашни 2 метр хулăнăш каяш пухăнсан ăна таптаса хытарса çĕрпе хупласа пырĕç. Çакăн пек 6–7 сий пулĕ. Тавралăха çак полигон пачах та вараламĕ.

Тĕл пулусем вăхăтĕнче ытти ыйтусем те пулчĕç. Кусем вĕсем ялсенчи çулсене йĕркене кĕртессинчен, шывпа тивĕçтерессинчен, тĕрлĕ тĕллевпе илнĕ кредитсемшĕн тӳлесе татассинчен тытăнса ачасене патриотла воспитани парасси таранах. Граждансем вĕсем çине тулли хуравсем илме пултарчĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Çемье кунне халалласа

# Пултаруллă çемьесене чысларăмăр

Кашни çулах майăн 15-мĕшĕнче Çемье кунне паллă тăваççĕ. Эпир те çав ятпа асăннă кун Тойкилтĕ ялĕнчи библиотекăна Тойкилтĕ, Шаптак, Платкасси, Хорнуй ялĕсенчи ырă ята тивĕçнĕ çемьесене чĕнтĕмĕр.

Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.А. Любимова ял тăрăхĕн территорийĕнчи çемьесен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пачĕ.

Мĕн тĕрлĕ çемье – çавăн тĕрлĕ шăпа. Акă Шаптак ялĕнчи Анна Александровнапа Федот Васильевич Соколовсем пĕрле пурăнма тытăнни 50 çул. Нина Викторовнапа Михаил Романович Романовсем вара пĕрле 58 çул килĕштерсе пурăнаççĕ.

Колесниковсем – çамрăк çемье. Вĕсем 6 ача пăхса ӳстереççĕ, 4 ачи вара усрава илнĕскерсем. Çапла тума, паллах, ачасене чун-чĕререн юратакан, çирĕп чун-чĕреллĕ çынсем кăна пултараççĕ.

Тойкилтĕри Эльвира Геннадьевнапа Владислав Порфирьевич Сильвестровсем 6 ача çитĕнтереççĕ. Ачисем те хăйсем пекех ĕçчен те пултаруллă.

Ял библиотекин заведующийĕ М.А. Николаева хăйĕн сăмахĕнче çемьен вырăнĕ çинче чарăнчĕ, Владимир Солоухинăн «Под одной крышей» калавĕпе паллаштарчĕ.

Пухăннисене шкул директорĕ И.А. Сергеев шкул столовăйне хăнана чĕнчĕ, пурне те Çемье кунĕ ячĕпе саламларĕ. Г.М. Охаринапа А.К. Соколова хатĕрленĕ апатçимĕç пурин кăмăлне те кайрĕ.

Хăнасене Юлия Аркадьевнапа Владимир Валерианович Железновсем, С.Н. Матвеева, Г.А. Малясова, Д.И. Михеева, З.Г. Купцова илемлĕ юрăсемпе саламларĕç.

Юлашкинчен В.А. Любимова уява пынисене Тав çырăвĕсем, кĕнекесем парса чысларĕ.

**М. НИКОЛАЕВА,**
**Тойкилтĕ библиотекин заведующийĕ.**

# Çемьерен пуçланать пĕтĕмпех

Майăн 15-мĕшĕнче эпир Мăн Сĕнтĕрти культурăпа кану центрĕнче Çемье кунне чаплă лару-тăрура паллă турăмăр. Малтанах чĕнӳ-открыткăсем валеçрĕмĕр, çемьесене саламласа плакат, уяв сĕтелĕ хатĕрлерĕмĕр.

Çак уява Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕн настоятельне Игнатий аттене те чĕнтĕмĕр. Вăл тасалăха упрасси, сăрапэрехрен сыхланмалли, ачасене упрамалли çинчен каларĕ. Çемьесене культурăпа кану центрĕн директорĕ И.М. Зайцев, библиотека заведующийĕ С.Г. Соколова, «Сундырь-Хлеб» ООО директорĕ Л.Г. Ильгечкин саламларĕç.

Уйрăмах вара Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн администрацийĕнче ĕçлекен В.В. Красновапа Л.Г. Ильгечкин тав сăмахне тивĕç, уяв ирттерме вĕсем пысăк пулăшу пачĕç. Уяв сĕтелĕ те пурин кăмăлне те кайрĕ. Библиотека специалисчĕсем Т.Н. Ефимова тата М.В. Лаптева ертсе пынипе кулăшсем те, вăйăсем те, ăмăртусем те сахал мар пулчĕç, юрă-кĕвĕ янăрарĕ.



**В. КРАСНОВА,**
**хĕрарăмсен канашĕн председателĕ.**
**Сăн ӳкерчĕкре: уявра.**

Çĕнĕ экономика условийĕсенче

# Кризис лăпланса ларма хушмасть



***Пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕ нумай предприятисемпе организацисем умне сахал мар йывăрлăх кăларса тăратрĕ. Чылай çĕрте производство чакать, ĕç вырăнĕсем пушанаççĕ т. ыт. те. Апла пулин те вăхăт кăтартса панă тăрăх кризисран усси те çук мар иккен. Рынок участникĕсене вăл малалла аталанмалли çĕнĕ формăсене пурнăçа кĕртме хистет. Çавна май «Россельхозбанк» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн Муркашри хушма офисĕн управляющийĕпе Ирина Валентиновна ПАВЛОВАПА тĕл пулнă май хамăн калаçăва çак ыйтуранах пуçлас терĕм:*** **«Росселхозбанкра» юлашки вăхăтра мĕнле çĕнĕлĕхсем пурнăçа кĕчĕç-ха?».**

– «Россельхозбанк» Перекет банкĕпе тата Внешторгбанкпа пĕрле Раççейре пухса хатĕрленĕ çăмăл автомашинăсене туянма çăмăллатнă кредит уйăрмалли правительство программине хутшăнать. Хамăр çĕршыври автомобиль промышленноçне пулăшас тĕллевпе патшалăх асăннă кредитăн банк процентне рефинансировани ставкин 2/3 пайĕ чухлĕ компенсацилет.

Асăннă кредита илмелли условисем ытлашши улшăнса тăмаççĕ. Уйрăмлăхĕ çакăнта кăна: çăмăллатнă кредита 2011 çулччен тӳлесе татмалла, пĕрремĕш взноса автомашинăн 30 процентĕнчен кая мар тӳлемелле, автомашина 350 пин тенкĕрен ытла тăмалла мар. Кунсăр пуçне тĕп услови вăл – автомобиль РФ Минпромторг спискокне кĕмелле. Апла пулсан Чăваш Енре пурăнакансем АвтоВАЗ продукцийĕн кирек хăш модельне туянма та çăмăллатнă кредит илме пултарĕç.

**– «Россельхозбанка» Раççей Правительстви агропромышленность комплексĕн финанс системин хăй тĕллĕнлĕхне ӳстерес тĕллевпе йĕркеленĕ. Ку тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем пурнăçа кĕреççĕ?**

– Пирĕншĕн тĕп çул-йĕр вăл ял хуçалăхне 2008–2012 çулсенче аталантармалли патшалăх программин мероприятийĕсене, кунпа пĕрлех хушма хуçалăх тытса тăракансене кредит пулăшăвĕ парасси пулса тăрать. Пĕтĕмпе филиал 15 пине яхăн хушма хуçалăха кредит парса пулăшнă.

Хушма хуçалăха аталантарма илнĕ кредитăн процент ставки 17 процентпа танлашать. Кредитпа усă курнăшăн тӳлемелли суммăран 12 процентне патшалăх саплаштарать. Çакă та палăрăмлă самант. Илекен кредит суммине палăртнă чухне тĕп ĕç вырăнĕнчи тупăша кăна мар, хушма хуçалăхран илнĕ тупăша та шута илеççĕ.

Кредита уйрăм çыннăн е предприятин поручительствипе, заемщикăн е урăх çыннăн пурлăхне салука хывса унпа мĕнле сăлтавпа усă курассине шута илсе 5 çуллăх таран илме пулать. Çĕнĕ транспорт, трактор е ял хуçалăх оборудованийĕ туяннă чухне туянакан пурлăха та салука хывма пулать.

Кунпа пĕрлех банк «Пенсионный», «Надежный клиент», «Садовод», тĕрлĕрен потребительство тĕллевĕсемпе (кулленхи ыйтусене татса пама, транспорт, пĕчĕк механизаци хатĕрĕсем туянма, хушма хуçалăхра çурт-йĕр тума т. ыт. те) кредитсем уйăрать.

Предприятисемпе предпринимательсене çакăн пек кредитсем уйăрса пама пăхнă:

– процент ставкисене федераллă тата республика бюджетĕнчен субсидилессин условийĕпе кĕске вăхăтлăх тата нумай вăхăтлăх кредитсем;

– ăратлă çамрăк выльăх туянма, ăна салука хывса;

– ял хуçалăх техники е оборудовани туянма, ăна салук хывса;

– вексельсемпе кредитсем уйăрасси;

– «овердрафт» формипе кредитсем уйăрасси;

– пĕчĕк предпринимательство субъекчĕсем валли производствăна сарма, тĕп хатĕрсем туянма е модернизацилеме, çĕнĕ технологисем ĕçе кĕртме ансатлатнă программăпа кредитсем уйăрасси.

Хальхи вăхăтра районти ял хуçалăх продукцине туса илекенсене эпир çавăн пекех уй-хир ĕçĕсене туса ирттерме те кредитсем сĕнетпĕр. Районти агропромышленность комплексне вăхăтра тата тивĕçлĕ пулăшу пама пирĕн ресурссем çителĕклĕ.

**– «Россельхозбанкра» вкладсен тĕсĕсем чылай. Вĕсенчен хăшне суйласа илессипе эсир пирĕн вулакансене мĕн сĕннĕ пулăттăр?**

– Вклад тĕсне суйласа илес тетĕр пулсан чи малтанах çавна шута илĕр: укçа-тенкĕне мĕн валли хывас тетĕр, мĕн чухлĕ тата мĕн вăхăтлăха? Вкладăн типне, процент ставкине тата процентсене капитализацилесси пуррипе çуккине асăрхăр.

Ытларах чухне çынсем пысăк процент ставкиллĕ депозитсем суйласа илме тăрăшаççĕ, вĕсем ытларах тупăш кӳрессе шанаççĕ. Ку тактика пур чухне те шаннине тивĕçтермест. Вкладсене вырнаçтарнă чухне капитализаци пуррипе çуккине шута илме сĕннĕ пулăттăм. Пирĕн банкра вăл уйăхсерен. Хывнă укçашăн пыракан процентсем вклад çумне уйăхсерен хушăнса пыраççĕ. Çавна май хушăнакан процент сумми те ӳссе пырать.

«Россельхозбанкра» уйăхсеренхи капитализациллисем 3 тĕрлĕ вклад: «Пенсионный», «Агро-Стимул» тата «Агро-Партнер». Мал тĕллевлисемшĕн, хăш вăхăта мĕнле сумма кирлĕ пулассине палăрткансемшĕн «Агро-стимул» юрăхлă пулĕ. Ку вкладăн укçа упрамалли срок диапазонĕ анлă: 91 кун, 180 кун, 1 çулталăк, 730 кун. Процент ставки укçана мĕн вăхăт усранинчен килет, 12,5 процента çитет. Пуçласа хуракан взнос – 3000 тенкĕ. Хыççăн ăна татах ӳстерме те, процентсемпе усă курма та пулать.

«Агро-Партнер» «Россельхозбанкпа» килĕшӳ тунă организацисенче ĕçлекенсем валли меллĕрех. Бухгалтери укçа-тенкĕне сотрудниксен вклад счечĕ çине куçарса тăрать. Çапла майпа вклад проценчĕпе ĕç укçи çумне хушма тӳлев илме май пур. Вкладăн чи пĕчĕк шайĕ мĕн чухлĕ пулмаллин виçи пур. Укçана вăхăт çитиччен илсен те вкладăн 7 процент ставки сыхланса юлать. Вкладăн управ вăхăчĕ 3 çул.

Кунсăр пуçне «Россельхозбанкра» «Агро-Бонус», «Агро-Vip», «Агро-Классика» тата «Агро-Идеал» вклад тĕсĕсем те пур. Кашниех хăйне май лайăх. Кирек епле вклада уçма та банка çыннăн хăй кам пулнине ĕнентерекен документпа пымалла.

**– «Россельхозбанк» пенсионерсен ахаль те пысăках мар тупăшĕсене ӳстерме епле пулăшатьши?**

– «Пенсионный» вклад «Россельхозбанкра» чи анлă сарăлнисенчен пĕри. Ăна пĕтĕм тапхăрĕпех хушма укçа-тенкĕ хывса ӳстерсе пыма май пур. Ставка 10 процентпа танлашать, вклад суммине вăхăт çитиччен илсен те процент виçи сыхланса юлать. Вклад уçма 500 тенкĕрен кая мар кирлĕ. Вклад срокĕ – 1 çулталăк. «Пенсионный люкс» вкладăн процент ставки ăна мĕн вăхăтлăха хунинчен килет, 180 куна 11,5 процентпа, çулталăклăха 12,75 процентпа танлашать.

Пенси вклачĕсене уçма хушма пенси удостоверенийĕ кирлĕ. Пенсионерсем Пенси фончĕн управленийĕнче хăйсен пенси укçине суйласа илнĕ вклад çине куçарса тăма заявлени çырса пама пултараççĕ. Ку меллĕ: почтальона та кĕтмелле мар, почтăра пенси илме черет тăрас хуйхă та пĕтет.

Йывăр вăхăтра пенсионерсене «Пенсионный» кредит пулăшма пултарать. Ăна 18 процентпа 3 çуллăха параççĕ. Кредитăн чи пысăк сумми – 60 пин тенкĕ.

Эпир уйрăм çынăнне те, пĕтĕмĕшле ял хуçалăхĕнне те интересĕсене тĕпе хурса ĕçлетпĕр.

**– Ирина Валентиновна, хаçат вулакансен ыйтусем пулсан вĕсем сирĕнпе мĕнле майпа çыхăнма пултарĕç?**

– Пирĕн хушма офис Муркаш ялĕнче, Мир урамĕнче, 5-мĕш çуртра вырнаçнă (Федераллă казначейство управленийĕн районти уйрăмĕн çурчĕ). Çыхăнмалли телефон: 62-2-15.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

**Редакциренен.** ***Кунпа пĕрлех ыйтусене редакцие 62-2-82 телефонпа та шăнкăравласа пĕлтерме пулать. Вĕсем çине Ирина Валентиновна сире тулли хурав парĕ.***